27-мĕш ҫул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ЯНВАРЬ
20
ШАМАТКУН
13(6764) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Белоруссири 1-мĕш фронт ҫарĕсен командующине

Совет Союзĕн Маршалне ЖУКОВА

Фронт штабĕн начальникне

Генерал-полковника МАЛИНИНА

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт ҫарĕсем, наступление вăйлатса пырса, паян, январĕн 18-мĕшĕнче СОХАЧЕВ, СКЕРНЕВИЦЕ тата ЛОВИЧ хулисемпе ҫулйĕрсен паха узелĕсене — нимĕҫсен оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕсене—тытса илнĕ.

СОХАЧЕВ, СКЕРНЕВИЦЕ тата ЛОВИЧ хулисене туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче ҫаксем чапа тухнă: ПЕРХОРОВИЧ генерал-майорăн, БЕРЗАРИН генерал-лейтенантăн, БЕЛОВ генерал-полковникăн, ЛУКЬЯНЧЕНКО генерал-лейтенантăн, КУШЕВ генерал-майорăн, ПУЛКО-ДМИТРИЕВ генерал-лейтенантăн, ПОЗНЯК генерал-майорăн, СИЯЗОВ генерал-майорăн, МУЗЫКИН полковникăн, ПАВЛОВСКИЙ полковникăн ҫарĕсем; КРЮКОВ генерал-лейтенантăн кавалерисчĕсем; танковăй ҫарсен генерал-полковникĕн БОГДАНОВАН, РАДЗИЕВСКИЙ генерал-лейтенантăн, танковăй ҫарсен генерал-майорĕн ВЕДЕНЕЕВАН, танковăй ҫарсен генерал-майорĕн ТЕЛЯКОВАН, танковăй ҫарсен генерал-лейтенанчĕн КРИВОШЕИНАН, ГУСАКОВСКИЙ полковникăн, МЕЛЬНИКОВ полковникăн, ПАШКОВ полковникăн, НАРУЦКИЙ полковникăн, СУЗДАЛОВ подполковникăн танкисчĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн ГОДИНАН, артиллери генерал-майорĕн КОСЕНКАН, артиллери генерал-майорĕн ПЛАСКОВАН, СОКОЛОВ полковникăн, ПУХОВ полковникăн, КОРЧАГИН полковникăн, БИЛЬДИН полковникăн, артиллери генерал-майорĕн СЕРЕДИНАН, ПОТЕМКИН полковникăн, ИВАНОВ полковникăн, ГРЕХОВ полковникăн, КОЛОКОЛОВ полковникăн, ДМИТРИЕВ подполковникăн, ПАЛЬЧОВ подполковникăн, ПОДОЛЬСКИЙ полковникăн, ВАХРОМЕЕВ полковникăн артиллерисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн РУДЕНКАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн БРАЙКОН, авиаци генерал-майорĕн ТОКАРЕВАН, авиаци генерал-майорĕн ДЗУСОВАН, авиаци генерал-майорĕн ТАТАНАШВИЛИН, авиаци генерал-лейтенанчĕн САВИЦКИН, ТИМОФЕЕВ полковникăн, БЕЛОУСОВ полковникăн, ИСАЕВ полковникăн, КАРЯГИН полковникăн, ТИЩЕНКО полковникăн, ОРЛОВ подполковникăн, МЯСОЕДОВ полковникăн летчикĕсем; инженери ҫарĕсен генерал-майорĕн КОМАРОВАН, инженери ҫарĕсен генерал-майорĕн ФУРСАН, БЕЛЬСКИЙ полковникăн, ВАНДЫШЕВ полковникăн саперĕсем; ҫыхăну ҫарĕсен генерал-майорĕн ЛИТВИНЕНКАН, СОЛОВЬЕВ полковникăн, ФАЛИН полковникăн, СМОЛИЙ полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ҫĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, СОХАЧЕВ, СКЕРНЕВИЦЕ тата ЛОВИЧ хулисене туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене «СОХАЧЕВСКИ», «СКЕРНЕВИЦСКИ» тата «ЛОВИЧСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 18-мĕшĕнче, 23 сехет те 30 минутра пирĕн Тăван ҫĕршыв столици МУСКАВ, икҫĕр ҫирĕм тăватă тупăпа ҫирĕм хут пĕр харăс персе, Белоруссири 1-мĕш фронтăн паттăр ҫарĕсене, СОХАЧЕВ, СКЕРНЕВИЦЕ тата ЛОВИЧ хулисене туртса илнĕскерсене, Тăван ҫĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, СОХАЧЕВ, СКЕРНЕВИЦЕ тата ЛОВИЧ хулисене ирĕке кăларассишĕн пынă ҫапăҫусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă ҫапăҫнăшăн ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван ҫĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн ҫапăҫса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕҫ захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи январĕн 18-мĕшĕ.
№ 228.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Украинари 4-мĕш фронт ҫарĕсен командующине

Арми генералне ПЕТРОВА

Фронт штабĕн начальникне

Генерал-лейтенанта КОРЖЕНЕВИЧА

УКРАИНАРИ 4-мĕш фронт ҫарĕсем, январĕн 15-мĕшĕнче САНОК хулинчен хĕвеланăҫнерехри районран наступлени тума тытăнса, тăшманăн вăйлă ҫирĕплетнĕ оборонине татса кĕнĕ те, тăватă кун наступлени туса ҫапăҫса пырса, 80 километра ҫити малалла кайнă, татса кĕнĕ вырăна фронт тăршшĕпе 60 километр таран аслăлатнă.

Наступлени тунă вăхăтра фронт ҫарĕсем ВИСЛОКА тата ДУНАЕЦ шывĕсем урлă каҫса кайнă, ЯСЛО тата ГОРЛИЦЕ хулисене—нимĕҫсен Краков енчи оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕсене—туртса илнĕ, ҫавăн пекех тата, тăшманпа ҫапăҫса, халăх пурăнакан ытти 400 пункта ытла йышăннă.

Нимĕҫсен оборонине татса кĕнĕ тата ЯСЛО хулипе ГОРЛИЦЕ хулине туртса илнĕ чухнехи ҫапăҫусенче ҫаксем чапа тухнă: МОСКАЛЕНКО генерал-полковникăн, ВОРОБЬЕВ генерал-лейтенантăн, БОНДАРЕВ генерал-лейтенантăн, ШМЫГО генерал-майорăн, БУШЕВ генерал-майорăн, ГУСЕВ генерал-майорăн, КИСЕЛЕВ генерал-майорăн, ВАСИЛЕВСКИЙ генерал-майорăн, МАТУСЕВИЧ полковникăн, БУШТРУК полковникăн, ТОМИЛОВСКИЙ полковникăн, ИВАНОВСКИЙ генерал-майорăн, ВАСИЛЬЕВ полковникăн, ПАРХОМЕНКО генерал-майорăн, ФЕДОРЧЕНКО подполковникăн ҫарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн КАРИОФИЛЛИН, СМИРНОВ полковникăн, СОКОЛОВ полковникăн, ЗАЙЦЕВ полковникăн, САВИЦКИЙ полковникăн, ЗАПОРОЖЧУК полковникăн, СЕРГЕЕВ полковникăн, артиллери генерал-майорĕн БАЛАШОВАН, ШЕВЧЕНКО полковникăн, КАРТАШОВ подполковникăн, ЦИВЧИНСКИЙ полковникăн, РАЕВ подполковникăн, НИКИТИН полковникăн, ЗАИКИН подполковникăн артиллерисчĕсем; танковăй ҫарсен генерал-майорĕн ШИРОБОКОВАН, ХОПКО полковникăн, ВИТКОВСКИЙ майорăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн ЖДАНОВАН, авиаци генерал-майорĕн ИЗОТОВАН, авиаци генерал-майорĕн КОТЕЛЬНИКОВАН, авиаци генерал-майорĕн ГОЛОВНЯН, авиаци генерал-майорĕн УХОВАН, авиаци генерал-майорĕн ЛАКЕЕВАН, СЕМЕНОВ полковникăн, ОБУХОВ полковникăн, ЧУК полковникăн, МАРГОШИН майорăн, ШУЛЬГИН майорăн летчикĕсем; инженери ҫарĕсен генерал-майорĕн КОЛЕСНИКОВАН, НАУМОВ полковникăн, ХАЛИЗЕВ полковникăн, ПАНКРАТОВ майорăн, ПОЛИЩУК майорăн саперĕсем; ҫыхăну ҫарĕсен генерал-лейтенанчĕн МАТВЕЕВАН, ТАРУНИН полковникăн, СТЕПАНЯН полковникăн, АРСЕНЬЕВ полковникăн, НУЖДИН подполковникăн, государство хăрушсăрлăх майорĕн КОРОТКИЙĔН связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ҫĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, нимĕҫсен оборонине татса кĕнĕ чухнехи тата ЯСЛО хулипе ГОРЛИЦЕ хулине туртса илнĕ чухнехи ҫапăҫусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене «ЯСЛОВСКИ» тата «ГОРЛИЦСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 19-мĕшĕнче, 18 сехетре хамăр Тăван ҫĕршыв столици МУСКАВ, икҫĕр ҫирĕм тăватă тупăпа ҫирĕм хут пĕр харăс персе, Украинари 4-мĕш фронтăн паттăр ҫарĕсене, нимĕҫсен оборонине татса кĕнĕскерсене тата ЯСЛО хулипе ГОРЛИЦЕ хулине туртса илнĕскерсене, Тăван ҫĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, нимĕҫсен оборонине татса кĕнĕ чухнехи тата ЯСЛО хулипе ГОРЛИЦЕ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă ҫапăҫусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă ҫапăҫнăшăн ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван ҫĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн ҫапăҫса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕҫ захватчикĕсене—вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи январĕн 19-мĕшĕ.
№ 229.

Франци профсоюзĕсен делегацийĕ Мускавра

Пĕтĕмĕшле Еҫ Конференцийĕн секретарĕ Бенуа Фрашон ертсе пынипе, Франци профсоюзсен Мускава килнĕ делегацийĕ ĕнер Сталин ячĕпе тăракан автозавода пынă. Делегатсем автомобиль гиганчĕн цехĕсемпе, производство техникипе паллашнă, цех начальникĕсемпе, рабочисемпе тата заводри мастерсемпе калаҫнă. А. Лихачев хăнасене «ЗИС—110» йышши ҫĕнĕ автомобильпе паллаштарнă. Кăҫал вăл йышши автомобильсене массăллăн тăвас ĕҫ пуҫланмалла.

Автозаводăн мотор цехĕнче Франци делегацийĕ пынă ятпа йышлă ҫынла митинг пулса иртнĕ. Митинга пухăннă рабочисем, инженерсемпе техниксем президиума пынă хăнасене хĕрӳллĕн алă ҫупса йышăннă. Мотор цехĕнчи работница Л. В. Новоселова Франци профсоюзĕсен делегачĕсене автозавод работникĕсен ячĕпе саламланă. Совет рабочийĕсем вăрҫă кунĕсенче, тенĕ вăл, станоксемпе машинасем патĕнче тăрса, Франципе совет халăхĕн пĕрлехи тăшманне—нимĕҫ фашизмне хирĕҫ пĕтĕм вăя хурса ĕҫлеҫҫĕ.

ВЦСПС председателĕ В. В. Кузнецов юлташ хăйĕн сăмахĕнче Совет Союзĕпе Франци халăхĕсем хушшинчи туслă ҫыхăну ӳсни ҫинчен каланă. Ирĕклĕхе юратакан халăхсем пĕрлешсе кĕрешнипе тăшмана татăклăн ҫĕнтерĕҫ тата ун хыҫҫăн ҫирĕп те вăраха пыракан мир туса хурĕҫ, тесе шанса каланă.

Франци делегацийĕ ячĕпе Францири чугун ҫул рабочийĕсен федерацийĕн секретарĕ Марк Дюпюи сăмах илнĕ. Ирĕке тухнă Францин халăхĕпе рабочийĕсен ячĕпе вăл автозаводри рабочисене тата СССР-ти мĕн пур халăхсене, гитлеризма хирĕҫ паттăррăн кĕрешекенскерсене, хĕрӳллĕ салам калать. Совет халăхĕн паттăр кĕрешĕвĕ, Хĕрлĕ Ҫар Сталинград патĕнче, Мускав патĕнче, Ленинград патĕнче чаплă ҫĕнтерӳсем туни Франци патриочĕсене яланах хавхалантарса пынă. Францири рабочи класс Пĕрлешӳллĕ нацисем Германи фашизмне ҫĕнтерсе тăкас тĕлĕшпе мĕн кирлине пурне те тăвассине шанса тăрать, тет Дюпюи.

Каҫхине Франци хăнисем Сталин ячĕпе тăракан заводăн Культура дворецне пынă, культура ĕҫĕ мĕнле пынипе тата художествăллă пултарулăхпа паллашнă.

Ирхине Франци делегачĕсем Союзсен ҫуртĕнче колоннăллă залра ачасен елкинче пулнă.

Рузвельт пресс-конференцире калани

ЛОНДОН, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, Рузвельт президент пресс-конференцире каланинчен ҫакна ăнланса илме май пулнă: «Пысăк тройка» тĕл пулнă вăхăтра вăл Пĕрлешӳллĕ нацисен вăхăтлăх советне тăвас ыйтăва кăларса тăратать.

Пресс-конференцире Рузвельтран сенатăн ют ҫĕршыв ĕҫĕсен комиссийĕн председателĕ Коннэли вăхăтлăх совет туса хума сĕнни ҫинчен хăйĕн шухăшне каласа пама ыйтнă. Рузвельт ҫапла ответленĕ: ҫывăхри вăхăтрах эпир Черчилльпе тата Сталин Маршалпа тĕл пулатпăр, тенисĕр пуҫне, эпĕ урăх нимĕн те калаймастăп, тенĕ.

Пичет представителĕсем Рузвельтран «Пысăк тройка» конференцийĕпе ҫыхăнса тăракан ĕҫсем ҫинчен ҫине тăрсах ыйтса пĕлесшĕн пулнă. Анчах Рузвельт урăх нимĕн те каламан.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Украинари 1-мĕш фронт ҫарĕсен командующине

Совет Союзĕн Маршалне КОНЕВА

Фронт штабĕн начальникне

Арми генералне СОКОЛОВСКИЕ

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт ҫарĕсем, тăшмана ҫавăрса илмелли ăста маневр туса тата фронт енчен атакăласа, паян, январĕн 19-мĕшĕнче, пирĕнпе союзлă Польшăн авалхи столицине тата культурăллă-политикăллă чи паха центрĕсенчен пĕрне—КРАКОВ хулине, нимĕҫсен оборонине питĕ вăйлă узелĕ пулнăскерне, ДОМБРОВА ҫĕркăмрăк районĕ патне пымалли вырăнсене хӳтĕлесе тăнăскерне, штурмласа туртса илнĕ.

КРАКОВ хулине туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче ҫаксем чапа тухнă: КОРОВНИКОВ генерал-лейтенантăн, КУРОЧКИН генерал-полковникăн, КОВАЛЬЧУК генерал-майорăн, ГОНЧАРОВ генерал-майорăн, КАЗАЧЕК генерал-майорăн, АНДРЕЕВ генерал-майорăн, ОЗИМИН генерал-майорăн, ТЕРТЫШНЫЙ генерал-майорăн, ГРИШИН генерал-майорăн, ВИНОГРАДОВ полковникăн, РОМАШИН полковникăн, ЗУБОВ генерал-майорăн, ПЕТРЕНКО полковникăн, КУЧЕРЕНКО полковникăн, КАЗАРИНОВ полковникăн, МЕТАЛЬНИКОВ генерал-майорăн, РОДИОНОВ генерал-майорăн ҫарĕсем; танковăй ҫарсен генерал-полковникĕн НОВИКОВАН, танковăй ҫарсен генерал-лейтенанчĕн ПОЛУБОЯРОВАН, ВОЛКОВ полковникăн, танковăй ҫарсен генерал-майорĕн РОМАНОВАН, ДУШАК полковникăн, ПРИХОДЬКО подполковникăн, КУРКОТКИН подполковникăн, СКИДАНОВ подполковникăн, ЛЕОНОВ полковникăн, ИЩЕНКО подполковникăн, СИМЧЕНКО подполковникăн, ЧИСТЯКОВ полковникăн, КУЗНЕЦОВ подполковникăн, ГУМЕНЧУК подполковникăн танкисчĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн СЕМЕНОВАН, артиллери генерал-майорĕн ДОРОФЕЕВАН, артиллери генерал-майорĕн КАБАТЧИКОВАН, артиллери генерал-майорĕн ВОЛКЕНШТЕЙНАН, КУПИН полковникăн, БАРСОВ полковникăн артиллерисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн КРАСОВСКИН, авиаци генерал-майорĕн ПРОНИНАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн РЯЗАНОВАН, авиаци генерал-майорĕн ГОРЛАЧЕНКАН, авиаци генерал-майорĕн АРХАНГЕЛЬСКИН, авиаци генерал-майорĕн ПОЛБИНАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн УТИНАН, МАЧИН полковникăн, КОЖЕМЯКИН полковникăн, ЧУМАЧЕНКО полковникăн, ШУНДРИКОВ подполковникăн, ДОНЧЕНКО подполковникăн летчикĕсем; инженери ҫарĕсен генерал-лейтенанчĕн ГАЛИЦКИН, БУЛАХОВ полковникăн, инженери ҫарĕсен генерал-майорĕн КОНЦЕВОЙАН, СЕРЕБРЯКОВ полковникăн, КОРДЮКОВ полковникăн, КОСТЕНКО полковникăн саперĕсем; ҫыхăну ҫарĕсен генерал-лейтенанчĕн БУЛЫЧЕВАН, РОГОВ полковникăн, НЕСТЕРОВ генерал-майорăн, ДЕНИСЕНКО подполковникăн, государство хăрушсăрлăх подполковникĕн ГРИБАН связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ҫĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, КРАКОВ хулине туртса илессишĕн пынă ҫапăҫусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене «КРАКОВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 19-мĕшĕнче, 20 сехетре пирĕн Тăван ҫĕршыв столици МУСКАВ, виҫҫĕр ҫирĕм тăватă тупăпа ҫирĕм тăватă хут пĕр харăс персе, Украинари 1-мĕш фронтăн паттăр ҫарĕсене, пирĕнпе союзлă Польшăн авалхи столицине КРАКОВ хулине тытса илнĕскерсене, Тăван ҫĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, КРАКОВ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă ҫапăҫусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă ҫапăҫнăшăн ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван ҫĕршывăн тата пирĕнпе союзлă Польшăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн ҫапăҫса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав.

Нимĕҫ захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи январĕн 19-мĕшĕ.
№ 230.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Белоруссири 3-мĕш фронт ҫарĕсен командующине

Арми генералне ЧЕРНЯХОВСКИЕ

Фронт штабĕн начальникне

Генерал-полковника ПОКРОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт ҫарĕсем, наступлени пуҫласа ярса, артиллерипе авиаци вăйлăн пыра-пыра ҫапса пулăшнипе, нимĕҫсен Хĕвелтухăҫ Пруссири нумай вăхăтлăха тунă, шалалла инҫете каякан оборонине татнă та, тăшман хытă хирĕҫ тăнине ҫĕнтере-ҫĕнтере, пилĕк кун хушши наступлени туса пырса, 45 километра ҫити малалла кайнă, татса кĕнĕ вырăн сарлакăшне фронт тăрăх 60 километр таран аслăлатнă.

Наступлени туса пырса, фронт ҫарĕсем ПИЛЬКАЛЛЕН, РАГНИТ ятлă ҫирĕплетнĕ хуласене тата нимĕҫсен оборонин ШИЛЛЕНЕН, ЛАЗДЕНЕН, КУССЕН, НАЙЕНИНГКЕН, ЛЕНГЕТЕН, КРАУПИШКЕН, БРАКУПЕНЕН ятлă вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене штурмласа туртса илнĕ, ҫавăн пекех тата, тăшманпа ҫапăҫса, халăх пурăнакан ытти 600 пункта ытла йышăннă.

Нимĕҫсен оборонине татассишĕн пынă ҫапăҫусенче ҫаксем чапа тухнă: ЛУЧИНСКИЙ генерал-лейтенантăн, ЛЮДНИКОВ генерал-лейтенантăн, КРЫЛОВ генерал-полковникăн, РОГАЧЕВСКИЙ генерал-майорăн, СИМИНОВСКИЙ генерал-майорăн, ПРИХИДЬКО генерал-майорăн, АЛЕКСАНДРОВ генерал-майорăн, ПЕРЕКРЕСТОВ генерал-майорăн, ВЕЙКИН генерал-майорăн, КАЗАРЦЕВ генерал-майорăн, БАТИЦКИЙ генерал-майорăн, ОЛЕШЕВ генерал-майорăн, БЕЗУГЛЫЙ генерал-лейтенантăн, ИВАНОВ генерал-майорăн, КУЗНЕЦОВ генерал-майорăн, ДАНИЛОВ генерал-майорăн, ДОНЕЦ генерал-майорăн, ЛАСКИН генерал-майорăн, КАЗАРЯН генерал-майорăн, ГЛАДЫШЕВ генерал-майорăн, КУШНАРЕНКО генерал-майорăн, ПАПЧЕНКО генерал-майорăн, ЗАРЕЦКИЙ полковникăн, БИБИКОВ полковникăн, КОЖАНОВ полковникăн, ВЛАДЫЧАНСКИЙ генерал-майорăн, СЫЧЕВ генерал-майорăн ҫарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн БАРСУКОВАН, артиллери генерал-лейтенанчĕн НИЛОВСКИН, артиллери генерал-майорĕн МАКАШУТИНАН, артиллери генерал-майорĕн ФЕДОРОВАН, артиллери генерал-майорĕн ПЕТРОПАВЛОВСКИН, артиллери генерал-лейтенанчĕн ДЕРЕШАН, артиллери генерал-лейтенанчĕн САЛИЧКАН, КУЗНЕЦОВ полковникăн, артиллери генерал-майорĕн ПОПОВАН, артиллери генерал-майорĕн ЯКОВЛЕВАН, артиллери генерал-майорĕн КОРСАНОВАН, артиллери генерал-майорĕн КОЛОТИЛОВАН, СТРУЕВ полковникăн, ПОПОВ полковникăн, СЕДОВ полковникăн, ЗАСЕКИН полковникăн, АЛЕШКИН полковникăн, КОТЛЯРЕВСКИЙ подполковникăн артиллерисчĕсем, танковăй ҫарсен генерал-полковникĕн РОДИНАН, танковăй ҫарсен генерал-лейтенанчĕн БУТКОВАН, танковăй ҫарсен генерал-лейтенанчĕн БУРДЕЙНЫЙАН, ЦИНЧЕНКО полковникăн, СЕМЕНЮК полковникăн, БАБЕНКО полковникăн, ШМАКОВ подполковникăн, БУРМИСТРОВ подполковникăн, СУРНИН подполковникăн, ХАЛИЕВ подполковникăн, СОММЕР полковникăн, ЛОСИК полковникăн, КЛИНФЕЛЬД полковникăн, ШАНИН подполковникăн, ПРОКОПЕНКО полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ХРЮКИНАН, авиаци генерал-майорĕн БЕЛОВАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн УШАКОВАН, авиаци генерал-майорĕн АНДРЕЕВАН, авиаци генерал-майорĕн ЗАХАРОВАН, ПРУТКОВ полковникăн, ЗИМИН полковникăн, ХАТМИНСКИЙ полковникăн, ЗАКЛЕП подполковникăн, авиаци генерал-майорĕн ШЕВЧЕНКАН, ШИНКАРЕНКО полковникăн, ЧУЧЕВ полковникăн, авиаци генерал-майорĕн НЕЧИПУРЕНКАН, АНДРЕЕВ полковникăн, авиаци генерал-майорĕн МОЛОКОВАН, РОДИН подполковникăн, ДЕЛЬФИН майорăн летчикĕсем; инженери ҫарĕсен генерал-лейтенанчĕн БАРАНОВАН, ЛЕЙМАН полковникăн, инженери ҫарĕсен генерал-майорĕн ГНЕДОВСКИН, инженери ҫарĕсен генерал-майорĕн ЖИРОВАН, ПОПЛАВСКИЙ подполковникăн, ЛУКАШЕНКО полковникăн, ПАРХОМЧУК полковникăн, инженери ҫарĕсен генерал-майорĕн ПОШЕХОНЦЕВАН, АНТОНОВ полковникăн, СОКОЛОВ полковникăн саперĕсем; ҫыхăну ҫарĕсен генерал-лейтенанчĕн БУРОВАН, ПРИХОДАЙ полковникăн, ҫыхăну ҫарĕсен генерал-майорĕн СОРОКИНАН, ПЛОТКИН полковникăн, КАСЬЯНОВ подполковникăн, КУЛТАШЕВ подполковникăн, ЮРКОВЕЦКИЙ полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ҫĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, нимĕҫсен оборонине татассишĕн пынă ҫапăҫусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 19-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван ҫĕршыв столици МУСКАВ, икҫĕр ҫирĕм тăватă тупăпа ҫирĕм хут пĕр харăс персе, Белоруссири 3-мĕш фронтăн паттăр ҫарĕсене, нимĕҫсен Хĕвелтухăҫ Пруссири оборонине татнăскерсене, Тăван ҫĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, нимĕҫсен оборонине татассишĕн пынă ҫапăҫусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă ҫапăҫнăшăн ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван ҫĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн ҫапăҫса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕҫ захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи январĕн 19-мĕшĕ.
№ 231.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Белоруссири 2-мĕш фронт çарĕсен командующине

Совет Союзĕн Маршалне РОКОССОВСКИЕ

Фронт штабĕн начальникне

Генерал-лейтенанта БОГОЛЮБОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, наступление вăйлатса пырса, паян, январĕн 19-мĕшĕнче, МЛАВАПА ДЗЯЛДОВО (ЗОЛЬДАУ) хулисене—çулйĕрсен паха узелĕсене тата нимĕçсен Хĕвелтухăç Пруссин кăнтăрти чикки патне пымалли вырăнсенчи оборонин тĕреклетнĕ пункчĕсене, ПЛОНЬСК хулине—çулйĕрсен пысăк узелне тата нимĕçсен Висла шывĕн сылтăм çыранĕнчи оборонин тĕреклетнĕ пунктне штурмласа туртса илнĕ.

МЛАВА, ДЗЯЛДОВО (ЗОЛЬДАУ) тата ПЛОНЬСК хулисене туртса илессишĕн пынă çапăçусенче çаксем чапа тухнă: ГУСЕВ генерал-лейтенантăн, БАТОВ генерал-полковникăн, ФЕДЮНИНСКИЙ генерал-полковникăн, ГЛЕБОВ генерал-лейтенантăн, БОБКОВ генерал-лейтенантăн, КОКОРЕВ генерал-лейтенантăн, КОЛГАНОВ генерал-лейтенантăн, АЛЕКСЕЕВ генерал-лейтенантăн, ЧУВАКОВ генерал-майорăн, ЭРАСТОВ генерал-лейтенантăн, ПОЛЕНОВ генерал-лейтенантăн, ЦЫПЛЕНКОВ полковникăн, КАЗАКЕВИЧ генерал-майорăн, ФРОЛЕНКОВ генерал-майорăн, БОРИСОВ генерал-майорăн, ДЖАНДЖГАВА генерал-майорăн, ГРЕБЕННИК генерал-майорăн, РАХИМОВ генерал-майорăн, ВЕЛИЧКО полковникăн, ТЕРЕМОВ генерал-майорăн, РАДЫГИН генерал-майорăн, БОРЩЕВ генерал-майорăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн СОКОЛЬСКИН, артиллери генерал-майорĕн ФЕДОРОВАН, артиллери генерал-майорĕн РОГОЗИНАН, артиллери генерал-майорĕн КОЗНОВАН, ЗЕЛЕНОВ подполковникăн, КУШНЕР полковникăн, РЕПЬЕВ полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн МАЛАХОВАН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ПОПОВАН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ПАНОВАН, ЯЧНИК полковникăн, МЛАДЕНЦЕВ подполковникăн, ГРАДЗЕЛИШВИЛИ подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ВЕРШИНИНАН, авиаци генерал-майорĕн АЛЕКСЕЕВАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ОСИПЕНКАН, авиаци генерал-майорĕн БОРИСЕНКАН, авиаци генерал-майорĕн ГЕТЬМАНАН, ПОКАЕВОЙ полковникăн, ВОЛКОВ полковникăн, ВУСС полковникăн СМОЛОВИК полковникăн, КАЛУГИН полковникăн, ВИНОГРАДОВ полковникăн, ДОДОНОВ полковникăн, ПЕТРОВ полковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн БЛАГОСЛАВОВАН, ВИЗИРОВ полковникăн, ШИТИКОВ полковникăн, РЕПИН полковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн БОРЗОВАН, çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн МАМОТКАН, ПРОТАСЕВИЧ подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве ялан лăха палăртса хăварас тесе, МЛАВА, ДЗЯЛДОВО (ЗОЛЬДАУ) тата ПЛОНЬСК хулисене туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «МЛАВСКИ» тата «ПЛОНЬСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 19-мĕшĕнче, 22 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, иксĕр çирĕм тăвата тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Белоруссири 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, МЛАВА, ДЗЯЛДОВО (ЗОЛЬДАУ) тата ПЛОНЬСК хулисене туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, МЛАВА, ДЗЯЛДОВО (ЗОЛЬДАУ) тата ПЛОНЬСК хулисене ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулăшкерсене, пите чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнмаллăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи

Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи январĕн 19-мĕшĕ.
№ 232.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Белоруссири 1-мĕш фронт çарĕсен командующине

Совет Союзĕн Маршалне ЖУКОВА

Фронт штабĕн начальникне

Генерал-полковника МАЛИНИНА

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, малалла вирлĕн наступлени туса пырса, паян, январĕн 19-мĕшĕнче, Польшăн питĕ пысăк промышленность центрне — ЛОДЗЬ хулине тата КУТНО, ТОМАШУВ (ТОМАШОВ), ГОСТЫНИН, ЛЕНЧИЦА хулисене — çулйĕрсен паха узелĕсене тата нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ пункчĕсене çапăçса туртса илнĕ.

ЛОДЗЬ, КУТНО, ТОМАШУВ, ГОСТЫНИН тата ЛЕНЧИЦА хулисене туртса илессишĕн пынă çапăçусенче çаксем чапа тухнă: ЧУЙКОВ генерал-полковникăн, ЦВЕТАЕВ генерал-полковникăн, КОЛПАКЧИ генерал-полковникăн, БЕЛОВ генерал-полковникăн, ХАЛЮЗИН генерал-лейтенантăн, ПУЛКО-ДМИТРИЕВ генерал-лейтенантăн, БЕЛЯВСКИЙ генерал-майорăн, ВЛАДИМИРСКИЙ генерал-майорăн, ОРЛЕАНСКИЙ генерал-майорăн, ШЕМЕНКОВ генерал-майорăн, СИЯЗОВ генерал-майорăн, ВЕРЖБИЦКИЙ генерал-майорăн, БАКАНОВ генерал-майорăн, артиллери генерал-майорĕн ХЕТАГУРОВАН çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн КАЗАКОВАН, артиллери генерал-лейтенанчĕн ПОЖАРСКИН, артиллери генерал-майорĕн ПЛАСКОВАН, артиллери генерал-майорĕн ФРОЛОВАН, артиллери генерал-майорĕн ИЗУМРУДОВАН, артиллери генерал-майорĕн ЛЯРСКИН, артиллери генерал-майорĕн КАМЕНСКИН, артиллери генерал-майорĕн РОДИЧЕВАН, ПИЛИПЕНКО полковникăн, ЗНАЧЕНКО полковникăн, ГРЕХОВ полковникăн, КАЛИНИЧЕНКО полковникăн, ПОЧИТАЛОВ полковникăн, ФИЛИППОВИЧ полковникăн, КОЛЕСНИКОВ полковникăн, КАГАН полковникăн, КОПЕЛЕВ полковникăн, ПУПКОВ полковникăн, КАРАИЧЕВ подполковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ОРЕЛАН, танковăй çарсен генерал-полковникĕн БОГДАНОВАН, танковăй çарсен генерал-полковникĕн КАТУКОВАН, РАДЗИЕВСКИЙ генерал-лейтенантăн, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ШАЛИНАН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн КИРИЧЕНКАН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ЮЩУКАН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ВЕДЕНЕЕВАН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ТЕЛЯКОВАН, ДРЕМОВ генерал-майорăн, БАБАДЖАНЯН полковникăн, БОЙКО полковникăн, ЖАРИКОВ полковникăн, ЛУКЬЯНОВ полковникăн, ЖАРОВ полковникăн, ГУСАКОВСКИЙ полковникăн, ЛИПАТЕНКОВ полковникăн, АНФИМОВ полковникăн, КОШЕЛЕВ полковникăн, ТЕМНИК полковникăн, СОЛОВЬЕВ полковникăн, МОРГУНОВ полковникăн, КУЗНЕЦОВ полковникăн, БАРАНЮК полковникăн, ШЕМЯКИН полковникăн, СМИРНОВ подполковникăн, СЕКУНДА подполковникăн танкисчĕсем; КРЮКОВ генерал-лейтенантăн, КОНСТАНТИНОВ генерал-лейтенантăн, ЯГУДИН генерал-майорăн, МИЛЛЕРОВ генерал-майорăн, КУРСАКОВ генерал-майорăн, КОБЛОВ генерал-майорăн, ЧАЛЕНКО генерал-майорăн, БЕЛОВ генерал-майорăн кавалерисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн РУДЕНКАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн БРАЙКОН, авиаци генерал-лейтенанчĕн САВИЦКИН, авиаци генерал-майорĕн КРУПСКИН, авиаци генерал-майорĕн СИДНЕВАН, авиаци генерал-майорĕн ТОКАРЕВАН, авиаци генерал-майорĕн ДЗУСОВАН, авиаци генерал-майорĕн ТАТАНАШВИЛИН, авиаци генерал-майорĕн КАРАВАЦКИН, авиаци генерал-майорĕн КОМАРОВАН, СМИРНОВ полковникăн, КОВАЛЕВ полковникăн, МИРОНОВ полковникăн, ЧИРВА полковникăн, ТИМОФЕЕВ полковникăн, БЕЛОУСОВ полковникăн, ИСАЕВ полковникăн, КАРЯТИН полковникăн, ИВАНОВ полковникăн, БЕРКАЛЬ полковникăн, ФЕДОРЕНКО полковникăн, ФЕДОРОВ полковникăн, БУЗЫЛЕВ полковникăн, СУХОРЯБОВ полковникăн, НАКОНЕЧНИКОВ подполковникăн, ИЩЕНКО подполковникăн, КОМАРОВ подполковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-полковникĕн ПРОШЛЯКОВАН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ТКАЧЕНКАН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ЯКОВЛЕВАН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ВОРОНОВАН, БЕЛЬСКИЙ полковникăн, ХАРЧЕВИН полковникăн, БОРИСОВ полковникăн, ВАНДЫШЕВ полковникăн, КУЗНЕЦОВ подполковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн МАКСИМЕНКАН, СМОЛИЙ полковникăн, ЧЕРКАССОВ полковникăн, ЗАХАРОВ подполковникăн, КАЛЕЧИЦА полковникăн, ВАКИШ подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве ялан лăха палăртса хăварас тесе, ЛОДЗЬ, КУТНО, ТОМАШУВ (ТОМАШОВ), ГОСТЫНИН тата ЛЕНЧИЦА хулисене туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «ЛОДЗИНСКИ», «ТОМАШОВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 19-мĕшĕнче, 23 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, виççĕр çирĕм тăвата тупăпа çирĕм тăватă хут пĕр харăс персе, БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ЛОДЗЬ, КУТНО ТОМАШУВ, ГОСТЫНИН тата ЛЕНЧИЦА хулисене туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ЛОДЗЬ тата çÿлерех асăннă ытти хуласене ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулăшкерсене, пите чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи

Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи январĕн 19-мĕшĕ.
№ 233.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, январĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре калană тăрăх, Ситтардран кăнтăртарахри районра, Голландипе Германи чиккинче, союзниксен çарĕсем Дитерен ялне тытса илсе, тăшман хирĕç тăнине сирсе пырса, çанталăк япăх пулнине пăхмасăрах, пĕртак малалла кайнă.

Ардента (Бельгире) Файмонвильпе Ондевальтен кăнтăртарахра хаяр çапăçусем пыраççĕ. Сальм участокĕнче союзниксен чаçĕсем Фильсальма тата çав пунктран хĕвелтухăçнерехри пĕр çÿллĕ вырăна йышăннă. Бовиньипе Шеренран кăнтăртарахра хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Бастоньрен хĕвелтухăçнерехре (Бельги) союзниксен çарĕсем Бурсие тытса илнĕ те Бурсипе Лонвиль хушшинчи ... Лонвильтен пĕр миля çурçĕртерехре тата Ремихран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре, Германипе Люксембург чикки çывăхĕнче, союзниксен чаçĕсем Ненниграи кăнтăртарахри районра хупăрласа илнĕ тăшман çарĕсене петерсе тăкнă.

Битш районĕнчи савăлта (Лотаринги) Рейперствейлер çывăхĕнче хăшпĕр ăнăçусем тунă. Анчах тăшманăн контратакисем союзниксен çарĕсене малалла кайма чарса тăраççĕ.

Гаттен районче, Мажинон тĕреклетнĕ тăрăхне татса керес шутпа тăшман сĕне вăйсем илсе пынă. Союзниксен çарĕсем тăшман контратакине сирсе пăрахнă. Гаттенран кăнтăртарахри вăрманта тăшман çарĕсем хăратса тăнине пĕтерсе тăкнă. Сапăçăва танксем кĕртсе ярса тăшман Рейн çумĕнчи наступлени тумалли вырăна сарас шутпа вăйлă атакăсем тунă. Союзниксем Штаттматтен тата Денгельсхейм ялĕсенчен тухса кайнă. Герлисхеймра урам хушшисенче хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Союзниксен авиацийĕ çапăçу районĕсенче кĕрешнĕ.

Темиçе çĕр йывăр бомбардировщик, истребительсем хÿтелесе пынипе, Гарбургри нефть тасатакан завода, Гамбургри нефть тасатакан заводпа подводнăй лодкăсем тăвакан верфе атакăланă. Савăн пекех тата Çурçĕр-хĕвеланăç Германири тата Падерборнри сортировка станцийĕсене, чугун çул синчи ремонт мастерскойне тапăннă.

ЛОНДОН, январĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи кĕспăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре калană тăрăх, Италири фронтсенче, Комаккио кÿллинчен кăнтăр хĕвеланăçнерехре тăшман патрулĕсем хăстарăнчĕ çапăçни палăрать.

Вырăссен чаплă патриочĕ-шухăшлавçи

(А. И. Герцен вилнĕренпе 75 çул тултарнă тĕле)

Вырăс халăхĕн ирĕклĕхшĕн пыракан кĕрешĕвĕн историйĕ, вырăс культури аталанăвĕн историйĕ аслă деятельсен пит те нумай ячĕсене пĕлет. Вĕсен ячĕсем ăруран ăрăва, ĕмĕртен ĕмĕре куçса пырса хисепре тăраççĕ. Аслă асаттесен сăн-сăпачĕ пире, хальхи тапхăрти çынсене тăван çĕршывшăн, хамăр халăхшăн паттăрла ĕçсем тума, ăслăлăхра çĕнĕ çулсем тĕпчесе хыпма хавхалантарать.

Вырăс халăхĕн çавăн пек паллă ывăлĕсенчен пĕри—Александр Иванович Герцен пулать. Вăл 1870 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче Парижра, хăйĕн халăхĕнчен, çывăх çынсемпе тусĕсенчен инçере вилнĕ.

Тăван çĕршыва, вырăс халăхне пĕтĕм чун-чĕререн юратас туйăм унăн питĕ ир вăранать. 16 çулхи ача, вăл Мускаври Воробьев сăрчĕ çинче хăйĕн тусĕпе—Огаревпа пĕрле, хăйĕн пурнăçне, хăйĕн вăйне тăван çĕршывшăн, халăхшăн пама тупа тунă.

Мускав университечĕн студенчĕ пулнă чухне вăл студентсем хушшинче патша режимне тÿрременех хирĕç пыракан кружок организацилеĕ, çавăншăн ăна арестлесе Вятка хулине ссылкăна янă. Темиçе çул иртсен ссылкăран таврăннă хыççăн, Герцен Белинскипе Огарев кружокне кĕнĕ. Часах ăна тепĕр хут арестленĕ те Новгород хулине ссылкăна янă.

1847 çулхи январьте вăл ют çĕршыва тухса кайнă. 1848 çулхи революцие вăл Италире кĕтсе илнĕ. Революци унăн ăшĕнче питĕ çутă ĕмĕтсем çуратнă. Вăл Париж хулине васкаса çитнĕ те революцие активлăн хутшăннă. Патша правительстви савăн çинчен пĕлсенех, Герценăн пурлăхĕсене çырса тухса, хăйне çавăнтах Россиăна таврăнма хушнă. Тăван çĕршывра ăна мĕн кĕтнине шута илсе, вăл «хисеплесе чĕннине» хапăл тума шутламач. Çавăн хыççăн, 1851 çулхи август уйăхĕнче сенат çапла йышăннă: Александр Иванович Герценăн «пĕтĕм пурлăхне тытса илнĕ хыççăн, хăйне яланлăхах государствăран хăваласа кăлармалла тăвас», тенĕ.

Çапла вара вырăс халăхĕн паллă патриочĕ хăйĕн çĕршывне, хăйĕн халăхне курма пултарайман...

* * *

Историе Герцен паллă революционер-демократ, пултарулă публицист-писатель, тарăн шухăшлавçă, философ-материалист пулса кĕнĕ.

Герцен таланчĕ питĕ пуян та тĕрлĕ енлĕ пулнă. Художествăллă сăмахăн пысăк таланчĕ пулса, вăл вырăс хресченне ăшă лирикăпа, ăшран тухакан сăмахсемпе сăнласа панă. Хĕрÿллĕ публицист пулса, вăл хăйĕн тăшманĕсене хаяр курайманлăхпа, çутăлса тăракан кулăпа, çивĕч ирониле питленĕ; агитатор-трибун пулса, Герцен халăха мĕн пур йышши тирансене хирĕç кĕрешме чĕннĕ; шухăшлавçă пулса, вăл Россиăри философиллĕ юхăмра хăйĕн паллă йĕрне хăварнă.

Герцена кĕрешĕве хавхалантаракан тĕп вăй—тăван çĕршыва юратни, тăван халăха юратни пулнă. Унăн пĕтĕм шухăшĕсем, унăн пĕтĕм кăмăлĕ Россия телейĕшĕн, унăн пуласлăхĕшĕн çуннă. «Россиăшăн ытла нумай» çуннăшăн ÿпкелекен, «хăйĕн чунĕшĕн» ытларах шухăшлама сĕнекен пĕр вырăс хĕрарăмне ответлесе, Герцен çапла çырнă: «Эпĕ Россиăшăн тăрăшатăп, мĕншĕн тесен эпĕ унăшăн тунсăхламасăр пултараймастăп, мĕншĕн тесен ирхине вăрансан та, çĕрле çывăрса кайнă чухне те, Россия пирки шухăшлатăп. Унтан килекен кашни хыпарах манăн чĕреме икĕ хут ытларах ыраттарать е икĕ хут ытларах савăнтарать».

Хăйĕн публицистикăллă тата художествăллă произведенийĕсенче Герцен вырăс халăхĕн характерне уçса парать. Вырăс халăхĕ аслă та пултарулă, унăн таланчĕ питĕ нумай енлĕ, вăл вăйлă тата анлă натурăллă, тесе кăтартса парать Герцен. Çавăнпа пĕрлех вăл ырă кăмăллă, сăпайлă, вашаватлă та именÿллĕ, тулли кăмăллă халăх. Акă вырăс çынни ахăрса кайнă çанталăкра, тăвăлра.—пăхăр-ха, епле вăл нимĕрен хăрамасăр, хăрушлăха хирĕç талпăнать... Акă вăл праçникре çынсемпе пĕрле урам тăрăх утать,—юрă, бубенсем янăрани, çăй-çай, шăхăрашни, сас-чĕвĕ—пĕтĕмпех савăнăç, вăй, пултарулăх, ви.ерен сиксе тухма хатĕр... «Нимĕçсем,—тет Герцен,—çакăн пек савăнăçа тĕлĕкре те курма пултараймаççĕ». Вырăс халăхĕн çав паллă лăхĕсене, тет Герцен, ăна пусарса хунă чухне куратпăр. Хăйĕн çинчен ирĕксĕрлĕх сăнчăрне сирсе пăрахсан, çамрăкланса çĕс келенсе кайсан, вăл пĕтĕм тĕнче умĕнче чи малта пыракан, чи паттăр та чи аслă халăх пулса тăрĕ. «Пăхса илĕттĕм сан çине, ачамçăм, çамрăкла, анчах кĕтсе илеймĕп, тупăкран та пулин ырă сунатăп сана»,—тесе çырнă Герцен, çав кунсене кĕтсе илме май çуккине курса.

Герцен-эмигрант цензурăсăр тухакан вырăс хаçат-журналне пуçарса янă. «Руçри тăвансене» чĕнсе, вăл чи малтан самодержавипе крепостничествăна хирĕç ирĕклĕ сăмах хускатнă. Хăйĕн вырăнне хакласа, Герцен çапла каланă: «Эпир—полици хĕнекен, помещиксем пусмăрлакан вырăс халăхĕн сасси... Эпир—Россиăра асаплантакан нумай çынсемшĕн кĕнеке пичетлесе кăларакансем».

Герценăн «Колокол» ятлă журналĕн сасси тăван çĕршывăн анлă енĕсене сарăлнă çĕршыври прогреслă чĕрĕ вăйсене вăратнă, кивĕ, реакциллĕ вăйсене хирĕç кĕрешме çĕнĕ, малта тăракан ĕмĕтсем патне илме чĕнсĕ. Революциллĕ агитацие çарса, Герцен чуралла шăплăха хускатнă, революци ялавне çĕклене, революционер-разночинецсене кĕрешме хавхалантарнă.

Герцен пурăннă вăхăтра Россиăра чи çивĕч ыйтусенчен пĕри—крепостникла пусмăра сирсе пăрахасси пулнă. Хăйĕн публицистла çав тери пысăк таланчĕпе Герцен хресченсене çĕр парса ирĕке кăларассишĕн, çынсене хĕнессине хирĕç, суда куç умĕнче тăвассишĕн, пичет ирĕклĕхĕшĕн тăнă. Крепостникла строя хирĕç кĕрешессине Герцен социализм идейисемпе çыхăнтарма пĕлнĕ.

Унăн социалистла идейисем, Маркс чĕнчи социализмăн палăрăмĕ пулса, ăслăлăх коммунизмĕнчен инçере тăнă пулин те, çапах та вĕсем хĕвеланăçĕнчи утопиллĕ социализмăн эпигонĕсен шухăшĕсенчен кăна мар, утопиллĕ социализмăн тĕп представителĕсен шухăшĕсенчен те уйăрăлса тăнă. Хĕвеланăçĕнчи аслă социалист-утопистсем—Сен-Симон, Шарль Фурье тата Роберт Оуэн, обществăлла отношенисене революциллĕ майсемпе улăштарассине ĕненмесĕр, обществăна урăхлатмалли пĕртен-пĕр май çынсене воспитани урлă лайăхлатасси пулса тăрать тесе шутланă пулсан, обществăна урăхлатас ĕçри тĕп мелсенчен пĕрине Герцен революциллĕ кĕрешÿре курнă. «Пирĕн вăхăтри социалист,—тенĕ Герцен,—революционер пулмасăр пултараймасть».

Идея тĕлĕшĕнчен Герцен социалист-утопистсемпе пĕр майлă пулнине вăл хресченсене мĕнле майпа ирĕке кăларас ыйту пирки калани лайăх палăртать. Вырăс дворянĕсемпе патшана вăл, юн тăкас мар тесе, хăйсем пуçарнипе хресченсене ирĕке кăларма чĕннĕ. Чи пахи, тенĕ Герцен, хресченсене çĕр парса ирĕке кăларас ыйту пулса тăрать. Мĕнле майсемпе ирĕке кăларасси çинчен тавлашмăпăр, тенĕ вăл. Çапла ĕнтĕ вăл çак шухăша хапăл тунă: обществăллă пурнăçа улăштарас ĕçре революци çулĕ пĕртен-пĕр çул çеç мар, унпала пĕрлех «юнсăр переворотсен» реформăсен çулĕ те пур, тенĕ вăл.

Франциri 1848 çулхи революци поражени тÿснĕ хыççăн, Герцен питĕ хытă асапланнă, скептик пулса тăнă, иккĕленме пуçланă. Анчах «Герцен демократизмпа либерализм хушшинче темĕн чухлĕ иккĕленнĕ пулин те, демократ унăн çиеле тухнă» (Ленин).

Герценăн скептицизмĕ вăл обществăпа политикăллă ĕçрен пăрăнма хăтланнине пăлтах та пĕлтермен. Вăл халăх патне, демократи патне, ĕçлекен халăх патне таврăннă. Хăй калашле, вăл «ватăлса та аманса», анчах хăйĕн ялавне çухатмасăр, каялла таврăннă. «Герценăн скептицизмĕ,—тенĕ Ленин,—«классенчен çÿлте тăракан» буржуаллă демократизмăн иллюзиллĕ шухăшĕсенчен пролетариатăн хаяр, пĕр пăркаланман, никам çĕнтерейми класлă кĕрешĕвĕ патне куçнин формине çеç пулнă».

Хăйĕн юлашки кунĕсенче Герцен, Бакунинăн анархизмне хирĕç кĕрешсе, Маркс ертсе пыракан пролетариллĕ интернационал еннелле çаврăннă. Вăл çапла шухăш патне пырса тухнă: çак интернационал пролетариатăн полкĕсене пуçтарма тытăнчĕ, вăл «капиталистсемпе мул хуçисемсĕр хăйĕн ирĕкне тивĕçтерме шутлать», тенĕ. Рабочисен пĕтĕм тĕнчери организацийĕсем, тенĕ Герцен, «пулас экономикăллă йĕркен çирвайхи палăрăмĕсем пулĕç». Мĕншĕн тесен эпир «ĕçсем малалла хальхин пекех пулса пыма пултарайманнине лайăх куратпăр. Юлашкинчен, капитал пуç пулса тăрасси те, мул хуçисем пуç пулса тăрасси те, феодализмпа аристократизм пуç пулса тăни вĕçленнĕ пекех, пĕтсе çухалмалла».

Пĕрремĕш интернационалпа унăн конгресĕсен ĕçĕсене Герцен питĕ тимлĕн сăнаса тăнă, рабочисен пĕтĕм тĕнчери съездĕсен вырăнĕ ÿссе пынине паллă тунă. Маркс идейисем Россиăна кĕрсе пынине вăл чĕререн саламланă, вырăс çыннисем те рабочисен юхăмĕнчен аякра тăрса юлманнине савăнса палăртнă.

* * *

Герцен хăйĕн пĕтĕм вăйне крепостничествăпа самодержавине хирĕç кĕрешес ĕçе кăна мар хунă, вăл тарăн шухăшлакан, вырăссен классикăллă философине пуянлатакан философ-материалист та пулнă. Унăн ячĕ вырăс халăхĕн чаплă шухăшлавçисен ÿчĕнче, Ломоносовпа, Радищевпа, Белинскипе, Чернышевскипе, Добролюбовпа тата Писаревпа пĕр ретре тăрать.

Философи тĕлĕшпе илсен, Герцен тăнăçă материалист, идеализмпа тĕшмĕшлĕхĕн пур формисене те хирĕç кĕрешекен çын пулнă.

«Пур çĕрте те тата яланах этем тивĕçлĕхĕ майлă—пусмăра хирĕç, ăс-тăн майлă—тĕшмĕшлĕхе хирĕç, наука майлă—тискерлĕхе хирĕç, аталанса пыракан халăхсем майлă—кая юлса пыракан правительствăсене хирĕç тăмалла. Çаксем ĕнтĕ пирĕн тĕп шухăшсем»,—тесе çырнă Герцен.

Хăй вăхăтĕнчи малта пыракан наукăн активлă представителĕ, унăн пропагандисчĕ тата хаюллă хÿтĕлекенĕ пулса, вăл нимĕçсен идеалистла философине хаярăн критикленĕ. Марксăн диалектикăллă материализмĕ патне çывхарнă.

Гегель философийĕнче Герцен унăн прогрессивлă енне те, реакциллĕ енне те палăртса хăварнă. Идеалист Гегель Герцена çырлахтарма пултарайман, мĕншĕн тесен Гегель «пурнăçран çав тери инçетре», опытран, пурнăçри практика ыйтăвĕсенчен питĕ инçетре тăнă. Герцен шучĕпе философсен задачи пурнăçпа çыхăнман абстракциллĕ формулăсем шухăшласа кăларассипе мар, опытран илнĕ даннăйсене теорилле çыхăнтарма пĕлнĕ никĕс çинче философи йĕркине туса хурассинче пулать. Философи системи халăх телейĕшĕн кĕрешнĕ çĕрте, наукăна аталантарнă çĕрте пулăшса тăмалла. XVIII-мĕш ĕмĕрĕн вĕçĕпе XIX-мĕш ĕмĕрĕн пуçламĕшĕнчи нимĕç идеалисчĕсен представителĕсене Герцен пурне те çивĕччĕн тăрăхласа критиклет.

Вырăссен XIX-мĕш ĕмĕрти классикăллă материализмĕн паллă представителĕ пулса, Герцен идеализма хирĕç кăна мар, эмпиризм представителĕсене хирĕç те кĕрешнĕ. Ун шучĕпе опыт урлă тата теори урлă пĕлсе пыни пĕр-пĕринчен уйăрălса тăма пултараймаççĕ. «Опыт,—тенĕ Герцен,—пĕлÿн никĕсĕ пулса тăрать. Анчах унăн хăйĕн виçи пур. Çав виçерен тухнă опыт е пурнăçа кĕрет е шухăш патне пырса тухать. Вĕсем Магдебургăн икĕ полушарийĕ евĕрлĕ: вĕсем пĕр-пĕрипе пĕрлешсен, вĕсене, лашасем кăкарса туртсан та уйăрас çук». Опыт урлă тупнă пĕлĕве шухăшласа тупнă пĕлÿрен уйăрма çук пулнипе пĕрех, естествознание те философирен уйăрма çук. Вĕсем уйăрăлми пĕрлĕхре тăраççĕ. «Философи естествознанисĕр пулма пултарайман пекех,—тет Герцен,—естествознани те философисĕр пулма пултараймасть».

В. И. Ленин Герценăн философине пысăка хурса хакланă. Ленин шухăшĕпе Герцен «çав тери çÿле хăпарса, хăй вăхăтĕнчи чи паллă шухăшлавçăсен пусăмне тăма пултарнă». Ленин калашле, Герцен «халĕ те (1912 çулта Я. Б.) естествоиспытатель-эмпириксен çав тери йышлă представителĕсенчен, идеалистла тата çурма-идеалистла пур философсенчен те тем териех çÿлте тăрать. Герцен диалектикăллă материализм патне çитиех хăпарнă, историллĕ материализм умне çитсе чарăнса тăнă».

* * *

Герцен нимĕçсем çинчен калани тата нимĕçсем славянсене хăратса тăни çинчен калани Отечественнăй аслă вăрçăн хаяр кунĕсенче питех те витĕмлĕ илтĕнет. Аслă революционер-демократ, малта пыракан наукăн хыпарçи, вăл хăйĕн литературăпа публицистикăллă пĕтĕм ĕçĕсенче нимĕçсене, вĕсем солдафонла каппайчăк пулнăшăн, славян халăхĕсене çав тери курайманнишĕн, вĕсен реакциллĕ национализмĕшĕн, вĕсем «Россиăна тăшманла курайманнишĕн тата Францие кĕвĕçнĕшĕн» çав тери вăйлăн питленĕ. Вĕсем пурте, тенĕ Герцен «вăйлă государство пуласси çинчен» ĕмĕтленеççĕ. Вăйлă государство вĕсене «ирĕке тухма мар, агрессиллĕ шухăшсене пурнăçлама кирлĕ». Герцен тахçанах çапла каланă: славянсемпе Россиăри халăхсене хирĕç ĕмĕрсем хушши кĕрешнĕ Германие аркатса тăкĕç, славян халăхĕсем пĕрне-пĕри пулăшса, тăванла пĕрлешсе пурăнĕç, тенĕ. Ирĕклĕхшĕн пыракан çав кĕрешÿре славян халăхĕсен хушшинче, Герцен шухăшĕпе, аслă вырăс халăхĕ уйрăмăнах хисеплĕ вырăн йышăнмалла.

«Россиăсăр пуçне—тет писатель,—славян тĕнчишĕн пуласлăх çук. Россиăсăр пуçне вăл аталанас çук, сапаланса кайса хăйĕн никама пăхăнманлăхне çухатĕ. Анчах унăн ăраскалĕ, унăн пуласлăхĕ пирĕн шутпа, апла мар».

Александр Иванович Герцен вырăс социал-демократийĕ вăй илес умĕн ĕçленĕ çынсен чи паллă представителĕ пулса тăрать. Вырăс культурин чи пысăк çитĕнĕвĕ, хальхи тапхăрăн чи çивĕч идейлă хĕçпăшалĕ пулса тăракан ленинизм—пĕтĕм тĕнчери культурăн малта пыракан революциллĕ никĕсĕ çинче никĕсленсе тăрать. Ленинизм, вырăссен XIX ĕмĕрти аслă шухăшлавçисемпе кĕрешекенĕсен малта пыракан идейисене йышăнса, вĕсене малалла аталантарнă.

Малта пыракан революциллĕ теорие пĕтĕм вăя хурса шыракан XIX ĕмĕрти Россиăн аслă çыннисен шутне Герцен та кĕрет. Унăн пĕтĕм пурнăçĕ чăнах та ĕнтĕ асаплă шыравра, кĕрешÿре, творчествăра иртнĕ. Ĕмĕр тăршшĕпех вăл хумхантаракан пурнăç ыйтăвĕсем çине ответ шыранă. Хĕвеланăç Европăри малти опыта вĕренсе пынă, ăна Россиăра сарнă, крепостничествăпа самодержавине хÿтĕлекенсене хаяр сăмахпа питленĕ. Герцен вырăссен ирĕклĕ пичетне пуçарса яракан пулнă. Çапла майпа çĕршыври чĕрĕ те малта пыракан вăйсене вăратнă, халăхшăн, çĕршывшăн, прогресшăн чун-чĕрене хурса ĕçлеме чĕннĕ. Ун хыççăн юлнă пуян наследство Тăван çĕршыв литературин ылттăн фондне кĕнĕ. Ленин калашле, Герцен «вырăс революцине хатĕрлес тĕлĕшпе питĕ пысăк ĕç тунă... вăл патша йĕркине халăх çĕнтерессишĕн кĕрешнĕ... вăл революци ялавне çĕкленĕ».

Малта пыракан наукăн аслă пропагандисчĕ, тăван çĕршывăн çулăмлă патриочĕ, Герцен, реакциллĕ фашизма хирĕç, хамăр çĕршывăн никама пăхăнманлăхĕпе телейĕшен паян пиренпе пĕрле кĕрешет.

Я. БЕТЯЕВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактора — 0—07, заместителĕн ... — 4 ... парти пурнăç пайĕн 3—39, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательстви конторин — 0—23.

НТ 00012 Типография № 1, Управления полиграфпро мышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. 6 59×42 в. л. Тираж 10.000 экз.